20-меш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944
МАРТ
15
ЮНКУН
53(6548) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Подсобнăй хуçалăхсем çураки умĕн

Çураки çывхарса килет. Отечественнăй вăрçăн виççĕмĕш çулĕнчи çуракинче подсобнăй хуçалăхсем умĕнче ответлă та пысăк ĕçсем тăраççĕ. Тырпулпа пахча-çимĕçсем анăçлă шуласшăн çуракине тĕплĕн хатĕрленсе, ăна кăтартуллăн иртерни татса парать.

Иртнĕ çулта республикăри подсобнăй хуçалăхсем хăйсен участокĕсенче чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç, тăван çĕршывăн апат-çимĕç базине пуянлатма пулăшрĕç. Каплин юлташ ЮРС начальникĕ пулса ĕçлекен подсобнăй хуçалăх 1943 çулта гектартан 134-шар центнер пахча-çимĕç туса илнĕ. Иртнĕ çулта вăл пĕтĕмпе 195,6 тонна çĕрулми кăларнă. Çавăн пекех Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри подсобнăй хуçалăх та начар мар ĕçленĕ. Вăл пĕтĕмпе хăйĕн участокĕ çинчен 1.394 центнер çĕрулми, 700 центнер пахча-çимĕç, 52 тонна тырпул пухнă. Подсобнăй хуçалăхра М. Сучкова, М. Твердохлебова, Т. Кондратенко юлташсем, рабочисем вăхăтра апат-çимĕç ытларах тăвас тесе, уйрăмах тăрăшса ĕçленĕ. Подсобнăй хуçалăх рабочисен пурнăç условийĕсене чылаях лайăхлатма пулăшнă.

Иртнĕ çулта уйрăм тата коллективлă пахчасенче те тухăçлă пахча-çимĕç туса илнĕ. Шупашкарти çăкăр завочĕн рабочийĕсем 200—300-шер тăваткăл метр çĕр лаптăкĕ çинче 50—60-шар пăт çĕрулми туса илнĕ. Ку ĕнтĕ çĕрпе лайăх усă курма пĕлнипе кирлĕ. Рабочисемпе работникĕсем хăйсен участокĕсенче, çуркуннерен пуçласа пахча-çимĕçене пуçтарса кĕричченех, пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ. Агротехникăн пур мероприятийĕсене те тĕплĕн пурнăçласа пынă.

Анчах та республикăра ку тĕлĕшпе ĕç пур çĕрте те лайăх пулса пынă теме çук. Канашри вагонсем юсакан заводри подсобнăй хуçалăхăн планпа 400 тонна çĕрулми туса илмелле пулнă пулсан, вăл 73 тонна кăна туса илнĕ. Çĕмĕрле районĕнчи промышленность предприятийĕсемпе суту-илÿ организацийĕсем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсем 130 гектар çĕр çинче 4.000 центнера яхăн çĕрулми туса илнĕ. Çапла вара вĕсен çĕрулми гектартан 30-шар центнер çеç тухнă. Çакă ĕнтĕ асăннă подсобнăй хуçалăхсен руководителĕсем хăйсен ĕçĕ çине сиплĕн, ответлăха туймасăр пăхнине кăтартса парать. Вĕсем акса хăварнă тырпулпа пахча-çимĕçе лайăх пăхса ÿстерессишĕн тăрăшман. Агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртмен. Шупашкарти пир-авăр фабрики (директорĕ Наумова юлташ) хăйĕн çĕр лаптăкне чылай акмасăр хăварнă. Акса хăварнă тырпулпа пахча-çимĕçсем те, кирлĕ пек пăхманнине пула, начар пулнă.

Халĕ подсобнăй хуçалăхсенче, уйрăм тата коллективлă пахчасенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕç пымалла. Пахча-çимĕçсемпе тырпул тухăçлă пуласшăн халь хи кунсем татса параççĕ.

Кăçалхи çул подсобнăй хуçалăхсен акмалли çĕр лаптăкĕ нумай ÿсет. Çĕр лаптăкĕсене предприятисемпе учрежденисем çумне 5—7 çула çирĕплетеççĕ. Иртнĕ çулсенче хăшпĕр предприятисен руководителĕсем, «ку çĕре пире вăхăтлăха çеç панă» тесе, уя тислĕк, минераллă удобренисем тăкма шутламан. Кăçал уя пек шухăшсем пулмалла мар. Ахальтен мар ĕнтĕ Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн XII-мĕш пленумĕ «1944 çулта уйрăм тата коллективлă пахчасен ĕçне малалла аталантармалли тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен» сÿтсе явнă. Фабкомсемпе завкомсен подсобнăй хуçалăхĕсене, уйрăм тата коллективлă пахчасене çуракине тĕплĕн хатĕрлесе çитерес ĕçе кирлĕ пек ертсе пымалла. Çирĕплетсе панă участоксем çине тислĕк, минераллă удобренисем, кĕл тата ытти иçсамсем халех турттармалла.

Малта пыракан подсобнăй хуçалăхсем çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитрĕç. Çакна эпир Якунин тата Челноков юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсенчи подсобнăй хуçалăхсенче куратпăр. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри подсобнăй хуçалăх уя 430 тонна тислĕк, 360 тонна фекали, 6 тонна минераллă удобренисем кăларнă. Акма вĕсен пур вăрлăхсем те çителĕклĕ. Çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес ĕç аван пырать. Паянхи куна 30 центнера яхăн çĕрулми тăрри касса пухнă.

Нумай подсобнăй хуçалăхсем акмалли вăрлăха çителĕклĕ тарап хатĕрлемен-ха. Тĕслĕхрен, Шупашкарти чăлхасем çыхакан фабрика çумĕнчи подсобнăй хуçалăхăн (фабрика директорĕ Богуславская юлташ) кăçал 20 гектар çĕр акса хăвармалла. Паянхи куна унăн 6 гектар валли çеç вăрлăх пур. Пир-авăр фабрики çумĕнчи подсобнăй хуçалăхăн вара нимĕн чухлĕ те вăрлăх çук. Апла пулин те фабрикăра ку ыйтупа никам та интересленмест.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1943 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче йышăннă постановленире суту-илÿ тата хатĕрлев организацийĕсене лайăх çĕрулмипе, унăн тăррине касмасăр, усă курма юраманни çинчен ятарласах кăтартса панăччĕ. Анчах та ку постановлени кирлĕ пек пурнăçа кĕрсе пымасть-ха. Сăмахран, Чебторг (директорĕ Судаков), столовăйсемпе ресторансен тресчĕ (директорĕ Жирнов) çĕрулми тăррине ку таранччен нимĕн чухлĕ те касса хатĕрлемен. Вĕсем ку ĕçе тума шутламаççĕ те. Кам ирĕк панă-ха Судаковпа Жирнов юлташсене Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕн решенийĕсене пăсма?

Подсобнăй хуçалăх руководителĕсен, уйрăм тата коллективлă пахчасем тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председателĕсен хăйсен участокĕсене çуракине хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе мĕн тума кирлине çине тăрсах пурнăçа кĕртмелле. Çуракинче кирлĕ инвентарьсене (кĕреçесем, катмаксем, кĕреплесем, лейкăсем т. ыт. те) халех хатĕрлесе хумалла. Ĕçлекенсем хушшинче ку енĕпе агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе анлăн сармалла. Халь, вăрçă вăхăтĕнче, подсобнăй хуçалăх рабочисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн тери паха вырăн йышăнса тăни çинчен кашни рабочипе служащине тĕплĕн ăнлантарса памалла. Кашни рабочипе работника, кашни служащи хăйĕн е коллективăн участокĕнчи çĕре çемçетессишĕн, çураки валли пахча-çимĕç вăрлăхĕсем хатĕрлесе çитерессишĕн, акса хăварнă пахча-çимĕçсемпе тырпула лайăх пăхса ÿстерессишĕн чĕререн çунса ĕçлетĕр.

Акма вăрлăх çителĕклĕ подсобнăй хуçалăхсен çав вăрлăха халех пухма тăрăшмалла. Вăрлăхсене кивçен е укçалла илмелле. Государство парасса кĕтсе тăмалла мар. Турттăм вăйĕпе ĕç вăйне те халех хатĕрлемелле.

Подсобнăй хуçалăхсенче, уйрăм тата коллективлă пахчасенче агротехникăн мĕнпур мероприятийĕсене пурнăçласа, çуракине лайăх хатĕрленсе ирттерсе, кăçал вăйлă тырпулпа пахча-çимĕç туса илер, çапла вара рабочисен апат-çимĕç базине татах та ытларах вăйлатар.

ВЦСПС-ăн XII-мĕш пленумĕ

Мартăн 10-мĕшĕнче Мускавра ВЦСПС-ăн XII-мĕш пленумĕ уçăлнă. Пленумра профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсен, чылай облаçсенчи комитетсен тата фабрикăсемпе заводсенчи комитетсен председателĕсем пур. Хăнасем хушшинче—промышленноçăн ертсе пыракан работникĕсем, рабочисем-стахановецсем, инженерла-техникла работниксем, Мускаври предприятисенчи профсоюз активĕ.

ВЦСПС-ăн XII-мĕш пленумне Н. М. Шверник юлташ уçать. Вăл сĕннипе пленум çакăн пек кун йĕрки йышăнать:

1. Профсоюз организацийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва малалла сарса ярас ĕçĕсем.

2. 1944 çулта уйрăм тата коллективлă пахчасен ĕçне малалла сарса ямалли тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен.

3. Профсоюз организацийĕсем столовăйсен, магазинсен тата подсобнăй хуçалăхсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрассине вăйлатасси çинчен.

4. Организациллĕ ыйтусем.

Пĕрремĕш ыйтупа ВЦСПС секретарĕ В. В. Кузнецов юлташ доклад туса панă.

Доклад хыççăн прениссем пуçланнă. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çарăн бронетанковăй тата механизированнăй çарĕсен офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовойĕсене Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн. СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи мартăн 10-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çарăн бронетанковăй тата механизированнăй войскисенчи офицерсен, сержантсен тата рядовойсен пĕр ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Ылттăн Çăлтăр» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Совет Союз Геройĕн ятне мĕн пурĕ 19 офицера, сержанта тата рядовоя панă. (ТАСС).

Инçене вĕçекен авиаци офицерĕсене Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн. СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, инçене вĕçекен авиаци офицерĕсен пысăк ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Ылттăн Çăлтăр» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă. Совет Союз Геройĕн ятне мĕн пурĕ 37 офицера панă. (ТАСС)

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 13-мĕшĕнче пирĕн ВОЛОЧИСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем Тарнополь облаçĕнчи район центрне — СКАЛАТ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата ТОУСТОЛУГ, КОЛОДЗЕЮВКА, СТАРЫЙ СКАЛАТ, КАЧАНУВКА, ИВАНОВКА, ЧЕРНИШОВКА ятлă пысăк ялсене йышăннă.

ПРОСКУРОВ хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тата унăн пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

ВИННИЦА хули енче пирĕн çарсем, наступлени пуçласа ярса, Винница облаçĕнчи ЛИПОВЕЦ, ИЛЬИНЦЫ, ДАШЕВ район центрĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса ытти 60 яла ытла йышăннă. Вăл шутра — ЗОЗОВ, СЧАСТЛИВАЯ, ОБОДНОЕ, ПОПОВКА, ПАРИЕВКА, ХРЫНИВКА, ЖАДАНЫ, КУПЧЫНЦЫ, СЕМИРЕЧКА ятлă пысăк ялсем.

УМАНЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă.

КИРОВОГРАД хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступление вăйлатса пынă, Кировоград облаçĕнчи МАЛЫЕ ВИСКИ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — КАЛЬНИ-БОЛОТО, НАДЛАК КОРОБЧИНО, ПОЛЕЕВКА, РОССОХОВАТКА, НОВО-ЗЛЫНКА, ПЛЕТЕНЫЙ ТАШЛЫК, ИВАНОВКА, ЗАХАРОВКА ятлă пысăк ялсем тата ВИСКА, ПЛЕТЕНЫЙ ТАШЛЫК ятлă чугун çул станцийĕсем.

КРИВОЙ РОГ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Кировоград облаçĕнчи УСТИНОВКА район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех ытти 50 яла ытла йышăннă. Вăл шутра — КАМЫШЕВАТА, ПЕТРОВКА, НОВАЯ ЕГОРОВКА, НОВО-КИЕВКА, ИЗРАИЛЕВКА, ЧЕРВОНЫЙ ПРАПОР ятлă пысăк ялсем.

АПОСТОЛОВО хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Николаев облаçĕнчи ВЛАДИМИРОВКА район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — СЕРГЕЕВКА, ФЕДОРОВКА, КАВКАЗ, ДАВЫДОВ БРОД, КОСТРОМКА, КРЕСТОВОЗДВИЖЕНКА, ГАЛАГАНОВКА, ЛИМАНЦЫ, ТИМОФЕЕВКА, ПОНЯТОВКА, НИКОЛЬСКОЕ ятлă пысăк ялсем тата БЕЛАЯ КРИНИЦА ятлă чугун çул станцийĕ.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем ДНЕПР шывĕ урлă унăн анатри юхăмĕнче каçнă та мартăн 13-мĕшĕнче ХЕРСОН хули урамĕсенче çапăçнă хыççăн чугун çулсен тата шыв çулĕсен пысăк узелĕ пулса тăракан ХЕРСОН хулине—нимĕçсен оборонин ДНЕПР шывĕн вăрринчи тĕреклетнĕ паха пунктне — туртса илнĕ.

Мартăн 6-мĕшĕнчен пуçласа 12-мĕшне çитиччен УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем тăшманăнне çакăн чухлĕ пĕтерсе тăкнă: танксем—115, хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем — 64, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 390, минометсем—230, пулеметсем—950, бронемашинăсемпе бронетранспортерсем—68, тракторсем—57, автомашинăсем—3.830.

Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 20.000 вилли ытла выртса юлнă.

Çав вăхăтрах УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—87, хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—50, тĕрлĕ калибрлă хир тупписем—338, минометсем—142, пулеметсем—1.077, винтовкăсемпе автоматсем—8.200, бронемашинăсемпе бронетранспортерсем—48, тракторсемпе тягачсем—121, автомашинăсем—5.342, паровозсем—27, вагонсем—242, боеприпас, хĕçпăшал тата ытти çар пурлăхĕн 53 склачĕ. 2.500 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 52 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 23 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТАЛЛИН ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔПЕ ПОРТНЕ ТАПАННИ

Çак кунсенче пирĕн авиаци тăшманăн Таллин чугун çулĕ узелĕнче пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине тата Таллин портĕнчи суднисем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Пушарсем тухнă. Çар, горючи тата боеприпас эшелонĕсем çуннă. Пушарта взрывсем пулнă. Вăйлă пушарсемпе взрывсем тата кивĕ портра, тинĕс арсеналĕн, бензохранилищĕн, хими завочĕн тата тар складĕсен территорийĕнче палăрнă. Пирĕн самолетсен экипажĕсем çав пушарсене унтан 250 километр ытла вĕçсе кайсан та курнă.

Пирĕн 5 самолет хăйсен базисене таврăнман.

☆ ☆ ☆

Волочиск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсемпе хаяррăн çапăçнă хыççăн Тарнополь облаçĕнчи район центрне — Скалат хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата чылай яла йышăннă. Нимĕçсенчен 1.000 автомашина яхăн тытса илнĕ тата апат-çимĕç, боеприпас, çар пурлăхĕн пысăк склачĕсене тытса илнĕ. 1.200 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 29 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 9 туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Винница хули енче пирĕн çарсем наступлени пуçласа янă. Совет пехотипе танкĕсем, артиллери пулăшса пынипе, тăшман оборонине татнă та, малалла ăнăçлăн куçса пырса, Винница облаçĕнчи Липовец, Ильинцы тата Дашев район центрĕсене туртса илнĕ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман питĕ пысăк çухатусем тÿсет. Совет чаçĕсем нимĕçсен 18-мĕш артиллери дивизине аркатса тăкнă, машинăсем туртса çÿрекен йывăр тупăсене нумай тытса илнĕ, çавăн пекех тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Кривой Рог хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединенин ĕнер Шевченково хулипе Долинская чугун çул узелне туртса илнĕ чаçĕсем тăшмантан 6 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 17 тупă, 33 хир туппи, 347 автомашина, 27 паровоз, боеприпас турттарса пыракан 8 чугун çул эшелонне, унсăр пуçне тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тиенĕ 145 вагон, 200 пичке бензин, апат-çимĕç тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕ хунă 13 склад тытса илнĕ. Тăшманпа çапăçса малалла куçса пырса, пирĕн çарсем Кировоград облаçĕнчи Устиновка район центрне туртса илнĕ тата чылай яла йышăннă. Тăшманăн 1.600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисен шучĕ самаях пысăк. Авиабомбăсен 2 пысăк складне тытса илнĕ.

Апостолово хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Пĕр соединени боецĕсем, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, Николаев облаçĕнчи Владимировка район центрне тытса илнĕ. Владимировкăшăн пынă çапăçура гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. 2 танк, 16 тупă, 2 боеприпас склачĕ тата пысăк апат-çимĕç склачĕ тытса илнĕ. Тепĕр участокра тăшман темиçе хаяр контратака тунă. Нимĕçсем çав контратакăсене хăйсен ÿсĕр салтакĕсемпе офицерĕсене кĕрте-кĕрте янă. Пирĕн боецсем, пăшалсемпе, пулеметсемпе персе, тăшман контратакисене пурне те сирсе янă. Гитлеровецсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Пирĕн позицисем умĕнче нимĕçсен 500 вилли таран выртса юлнă.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем Днепр урлă ăнăçлăн каçнă та, вирлĕн пырса çапса, чылай ял туртса илнĕ. Çав тĕреклетнĕ пунктсенче пулнă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем хăраса ÿксе, Херсон хулине тарнă. Нимĕçсене хăваласа пырса, совет боецĕсем каялла чакакан тăшман хыççăнах Херсон хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа урамсенче çапăçма тытăннă. Паян пирĕн çарсем Херсон хулине пĕтĕмĕшпех йышăннă. Нумай хĕçпăшал тата тăшманăн пысăк склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ февралĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа 27-мĕшне çитиччен тăшманпа татти-сыпписĕр çапăçнă. Çав çапăçусенче совет патриочĕсем гитлеровецсен 2 ротине пĕтерсе тăкнă. Каменец-Подольск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ февралĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пĕр район центрĕнче тăракан нимĕçсен гарнизонне сасартăк тапăннă. Гитлеровецсем хăраса ÿксе тарнă. Ял урамĕсенче тăшманăн 50 вилли ытла выртса юлнă. Партизансем трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

ПРОИЗВОДСТВĂРИ ÇĔКЛЕНУ

КУСЛАВККА, мартăн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинат коллективĕ март тата апрель уйăхĕсенче производство планне срокчен 5 кун малтан пурнăçлама, шефа илнĕ Куславкка МТС-ĕ валли çураки вăхăтĕнче кирлĕ ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене мартăн 20-мĕшĕччен хатĕрлесе пама пулнăччĕ

Халĕ комбинатри рабочисемпе работникĕсем илнĕ обязательствăсене тимлĕн пурнăçлассишĕн хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Мартăн 12-мĕшĕ тĕлне комбинат тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем хатĕрлемелли уйăхри задание 60 процент пурнăçларĕ.

Н. ПЕТРУЧЕНКО.

Ÿкерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ арми генералĕ К. А. Мерецков. Хăй боевой операцисене пĕлсе, хăюллă ертсе пынăшăн тата çав операцисене пула фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче тунă çитĕнÿсемшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх 1-мĕш степень СУВОРОВ орденĕпе наградăланă.

ТАСС фотоÿкерчĕкĕ.

Ялти художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, мартăн 20-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче Шупашкарта ялти художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрĕ пулса иртет. Смотрта художествăллă пултарулăхăн ялсенчи тата район центрĕсенчи смотрта мала тухнă коллективсемпе уйрăм çынсем пулаççĕ.

Ялти художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрĕн тĕллевĕ — художествăллă пултарулăх кружокĕсен пархатарлă ĕçне пăхса тухасси, талантлă организаторсемпе исполнительсене палăртасси, вĕсен идейăпа художество тĕлĕшĕнчи шайне ÿстересси пулать. Смотр, çавăнпа пĕрлех, художествăллă пултарулăх коллективĕсен репертуарне Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхĕ çинчен, совет халăхĕн Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи паттăрла ĕçĕпе патриотизмĕ çинчен калакан çĕнĕ произведенисемпе пуянлатма тивĕçлĕ.

Çак кирлĕ ĕçе тĕплĕн хатĕрленсе иртермелле. Художествăллă пултарулăхăн ялсенчи тата район центрĕсенчи смотрне иртерес тĕлĕшпе ĕçленĕ комиссисен республикăри смотра яма палăртнă коллективсене, уйрăм исполнительсене хăйсен пултарулăхне лайăххăн кăтартма — смотра хатĕрленме кирлĕ условисем тата смотра вăхăтра çитме майсем туса памалла.

Художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрне иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен комисси çинче те пысăк ответлăх тăрать. Унăн, вăхăта вăраха ямасăр, смотра кăтартуллăн иртерме мĕн кирлисене пĕтĕмпех хатĕрлемелле. Республикăри смотр художествăллă пултарулăх коллективĕсемпе уйрăм исполнительсемшĕн шкул пулса тăтăр. Çакна тума смотр вăхăтĕнче кружоксемпе уйрăм исполнительсене канашсем парса вĕрентессине организацилес пулать. Ку ĕçе искусствăла çутĕç работникĕсене, писательсене анлăн явăçтармалла.

Художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрĕнче палăрнă коллективсемпе уйрăм çынсене грамотăсем параççĕ тата укçан премилеççĕ.

Республикăри смотра лайăх хатĕрленсе иртерни—ялти художествăллă пултарулăха татах та çÿллĕ пусăма çĕклеме пулăшĕ.

Кинофикаци работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Мартăн 13-мĕшĕнче Шупашкарта кинофикацин районсенчи уйрăмĕсен начальникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта кинофикаци работникĕсен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕн итогĕсем çинчен Чăваш республикинчи кинофикаци управленийĕн начальникĕ Калиновский юлташ доклад туса панă.

Докладчик канашлăва пухăннисене кинофикаци ĕçне Совет Союзĕнче тата хамăрăн республикăра мĕнле организацилени çинчен тĕплĕн каласа панă.

Етĕрне районĕнче кăçалччен виçĕ киноустановка кăна ĕçленĕ. Унта ĕçлекен Готлиб юлташ кăçал хăйех сасăсăр кинокартина установкине тунă. Халĕ унпа Советски районра кино кăтартаççĕ. Вăл, кинофикаци управленийĕн пулăшăвĕсĕрех, хăйĕн станцине ĕçлекен тунă тата двигательсемпе аппаратсене юсама мастерской уçнă. Çапла вара унăн кăçал пур киноустановкăсем те ĕçе юрăхлă пулнă. Кунсăр пуçне Готлиб юлташ сасăллă тата сасăсăр кинокартинăсем кăтартма 7 механик, 2 моторист вĕрентсе хатĕрленĕ.

Анчах нумай районсенче кинофикаци пайĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Иртнĕ çулта уйрăмăнах Вăрнар тата Чкаловски районсенчи отделенисем начар ĕçленĕ. Юлашки вăхăтра Шупашкар районĕнчи ялсенче халăха печах та кино кăтартмаççĕ. Хăшпĕр çĕрте киномеханиксем аппаратсене питех те тирпейсĕр тыткалаççĕ.

Шупашкарти кино-театрта та çитменлĕхсем нумай. Унта пĕр йĕркелĕх те çук. Администратора нихăçан та хăй вырăнĕнче тупма çук. Е ун патне пырса кĕме те çук. Управленинчи бухгалтерпе счетовод тата ытти работниксем те ĕç дисциплинине пăхăнмаççĕ.

Çак çитменлĕхсем вĕсем отделени начальникĕсем хăйсен ответлăхне туйманнипе пирки, управлени енчен вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăман пирки пулаççĕ.

Канашлура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ Н.К. Иванов юлташ тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче уйрăм отделенисен тата киноработниксен ĕçне хытă критикленĕ.

Республикăра планпа 108 киноустановка ĕçлемелле пулсан, халĕ 50-шĕ çеç ĕçлеççĕ. Кино работникĕсем кино кăтартнисĕр пуçне урăх нимĕнпе те интересленмеççĕ. Картинăсене кая юлса илсе пыраççĕ. Тепĕр чухне уйăхĕпех пĕр картина кăтартаççĕ. Вĕсем колхозниксем умĕнче тăракан задачăсемпе интересленмеççĕ. Кино куракансем хушшинче нимĕнле культурăллă-массăллă ĕç те çук. Кино пуçланас умĕн нихăçан та докладсемпе лекцисем иртермеççĕ.

Иванов юлташ кино работникĕсем хушшинче воспитани тата политикăллă-массăллă ĕç начар пыни çинчен каларĕ. Вĕсем хушшинче Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес ĕçе те йĕркелемен, çавăн пекех механиксем хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерсе пырас тĕлĕшпе техникăллă кружоксем организацилемен. Çавăнпа ĕнтĕ кинофикаци кадрĕсене хатĕрлесси çителĕксĕр пулса пырать.

Канашлура пĕтĕмпе 9 çын тухса каларĕç. Отделени начальникĕсем хăшпĕр районсенче кино кăтартас ĕçе парти-совет органĕсем çителĕксĕр пулăшса пыни çинчен, çавна май чылай район центрĕсенче кино йĕркеллĕ кăтартманни çинчен чарăнса тăчĕç.

Юлашкинчен кинофикаци управленийĕн системинче ĕçлекенсем малашнехи ĕçе тĕпренех лайăхлатас шутпа хăйсем çине тăрăклă обязательствăсем илчĕç.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

Республикăри колхозсенче мартăн 10-мĕшĕ тĕлне çуракине мĕнле хатĕрленнине кăтартакан

СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Вăрлăх тасатнă	Клевер вăрри хывнă	Çĕрулми вăрлăхĕ хывнă	Тислĕк кăларнă
Улатăр	51,9	23,8	49,8	48,9
Элĕк	112,3	63,7	104,3	55,9
Вăрнар	136,5	50,9	87,7	83,4
Йĕпреç	72,2	59,5	77,8	32,1
Ишлей	108,7	70,0	99,1	65,4
Калинино	94,5	38,8	86,0	59,8
Канаш	105,5	24,6	46,9	59,7
Куславкка	110,5	30,5	100,0	41,2
Комсомольски	71,9	29,1	53,4	57,4
Красноармейски	102,2	50,0	93,7	64,4
Хĕрлĕ Чутай	117,8	59,3	76,3	54,0
Куакино	62,3	5,0	23,3	38,0
Сĕнтĕрвăрри	126,0	56,4	97,7	51,3
Муркаш	108,2	32,9	96,3	23,5
Октябрьски	105,9	40,3	112,0	43,1
Первомайски	111,5	4,1	56,4	49,0
Пăрачкав	89,3	8,3	55,5	24,0
Советски	58,1	97,2	122,3	32,6
Сĕнтĕр	92,6	86,7	91,4	82,5
Вăрмар	120,8	31,4	106,2	59,1
Çĕрпÿ	147,0	37,6	108,4	87,5
Шупашкар	109,4	20,8	113,9	45,0
Чкаловски	108,6	—	28,7	40,8
Чурачăк	86,1	12,8	85,6	24,5
Шăмăршă	63,2	20,8	20,0	26,4
Шăхасан	34,5	17,9	72,9	75,1
Сĕмĕрле	100,6	59,7	52,2	49,5
Етĕрне	98,4	45,0	106,4	66,2
Елчĕк	113,4	20,1	50,3	57,4
Тăвай	108,9	35,1	77,5	50,7
Шупашкар хули	141,2	133,3	124,7	76,8

„Трактор“ колхоз членĕсен пуçарăвне йышăнса илнĕ хыççăн

ЕЛЧĔК. Тăван çĕршывăн сулăмлă патриотки—Комсомольски районри «Трактор» колхозăн председателĕ Татьяна Иванова вăрлăх çитмен колхоза хăйĕн вăрлăхне пама çинчен пĕлтернех, Кĕçĕн Патрикел ялĕнчи колхозниксем кÿршĕри «Коммунист» колхоза 30 гектар акса хăвармалăх вăрлăх уйăрса пама йышăнчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем вăрлăх фондне хăйсен 115 пăт тыррине хывнă.

Çавăн пекех Çĕнĕ Пускел ялĕнчи колхоз та «Коммунист» колхозăн 20 гектар çĕрне акса хăвармалăх вăрлăх уйăрса парать. Унта халĕ вăрлăх пухас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Колхоз председателĕ Кириллов юлташ хăй пĕр гектар акмалăх вăрлăх уйăрса парать.

Асăннă колхозсем çуракине хатĕр. Вĕсем пурте вăрлăх çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Лашасем мăнтăр. Фураж çителĕклех. Утă-улăмсене тирпейлĕ тытаççĕ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе Кĕçĕн Патрикел колхозĕ уйрăмах лайăх ĕçлет. Унăн çураки вăхăтĕнче ака ĕçĕсене 14 лаша хутшăнмалла. Халĕ вĕсенчен 10 лаши вăтам ÿтлĕ, 4 лаши вара мăнтăр. Кунсăр пуçне 3 вăкăра кÿлме вĕрентнĕ. Плугсемпе сеялкăсене, сÿресене тата транспорт инвентарьне юсаса тирпейленĕ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕ тăрăшса ĕçлерĕ. Организаци секретарĕ пулса ялти учительница П. Галкина юлташ ĕçлет. Организацире 12 комсомолец. Вĕсем вăйăлă тырпул туса илессишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлессĕ. Социализмлă ăмăртăва анлăн сафса янă.

Кăçал кашни комсомолец 400 ĕçкунĕнчен кая мар тума сăмах пачĕ. Халĕ вĕсем вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлессĕ. Кашни комсомолец çуршар центнер кĕл пухнă. Комсомолецсем тăрăшнипе колхоз хĕле кĕнĕренпе уя 1855 лав тислĕк кăларчĕ.

Колхозри çамрăксем агрокружокра вĕренессĕ. Ку таранччен 5 заняти туса ирттернĕ. Вĕренÿре уйрăмах А. Карпакин малта пырать.

Н. САМАРКИНА.

Вăрнарсем кăçал гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илме сăмах пачĕç

(Ялхуçалăхĕнче малта пыраканĕсен районри канашлăвĕнчен)

Çак кунсенче Вăрнарта ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта колхозлă ялăн чи лайăх çыннисем—колхоз председателĕсемпе бригадирĕсем, звеньевойсемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем, уйхир ĕçĕн чаплă стахановецĕсем — колхозниксемпе колхозницăсем тата трактористсемпе комбайнерсем пухăнчĕç.

Канашлу 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе çитес çуракине ирттерес ĕçри задачăсем çинчен сÿтсе-яврĕ. Ку ыйтупа райсовет исполкомĕн председателĕ П. Осипов юлташ доклад туса пачĕ.

1943 ÇУЛХИ ИТОГСЕМ

Докладчик тата прение тухса калакансем çакна палăртрĕç: районри колхозсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, иртнĕ ялхуçалăх çулне начар мар вĕçленĕ: вăтамран илсен вĕсем гектартан 14,1 центнер тырă туса илнĕ, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçланă; авăн çапассине октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлнех вĕçленĕ. Çакăн хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен запасĕнчен тата общественлă фондран государствăна 150 пин пăт тырă сутрĕç. Кунсăр пуçне вĕсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма 360 пуç выльăх янă тата тăван фронтовиксем патне сахал мар аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, ăлă тумтирсем ярса панă.

Уйрăм колхозсен ĕçĕнче тата лайăхрах тĕслĕхсем курма пулать. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан, Хирпуçĕнчи «Победа», Уравăшри «1-ое мая», Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан, Хурăнсурти Чапаев ячĕпе тăракан, Çĕрпелти Ленин ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсем гектартан çĕр пăтран кая мар тырă туса илнĕ. Кĕстÿмĕрти Крупская ячĕпе тăракан тата «Волонтер» колхозсем кашни ĕнерен сĕт суса илмелли плана 112—123 процент тултарнă. «1-ое мая» колхозра кашни сысна аминчен 17,8 çăвăр, «Гигант» колхозра кашни кĕсререн пĕрер тиха илсе пурне те лайăх пăхса ÿстернĕ.

Районри колхозсене машинăпа-тракторнăй станцин коллективĕ пысăк пулăшу парать. Иртнĕ çулта вăл хăйĕн планне 101 процент тултарнă. Малта пыракан 3-мĕшпе 7-мĕш бригадăсем çулталăкри плана 122—125,9 процент тултарнă. Трактористсем Макаровпа Захаров, газогенераторнăй тракторпа ĕçлесе, кашниех 470 гектар сухаланă.

КĔРЕШÿ МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ

Вăрнарсем иртнĕ çулта чăннипех начар мар ĕçлерĕç. Çавна пула ку района ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе ЧАССР Совнаркомĕ хăйсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕç.

Анчах вăрнарсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем, кĕрешĕве татах та вăйлатса пырса, кăçал тата ытларах тырпул туса илме ĕмĕтленеççĕ.

— Иртнĕ çулти çитĕнÿсемпе лăпланса лармасăр пирĕн колхоз кăçал тата вăйлăрах тырпул туса илессишĕн кĕрешет, — терĕ канашлура Уравăшри «1-ое мая» колхоз председателĕ Я. Васильев.

— Эпир 250 гектар çине акмалли вăрлăхсене кĕркуннех сортласа хунă, вĕсене 1-мĕшпе 2-мĕш класлă кондицие лартнă. Уйхире 9.800 лав тислĕк, 2020 лав торфпа пĕве юшкăнĕ кăларнă; 72 центнер кĕл, 76 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 251 лав фекали хатĕрленĕ. Планпа 185 гектар кĕрхи çĕртме тăвас вырăнне, иртнĕ кĕркунне 269 гектар çĕртме тунă. Вăйлă тырпул никĕсне эпир хыврăмăр, çавăнпа кăçал гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илетпĕрех,— çирĕппĕн шантарса калать Васильев юлташ.

Прение тухса калакан ытти юлташсем те пысăк ĕçсем çинчен каларĕç. Колхозсем çак фронтовой уйăхлăхра çуракине тĕллĕн хатĕрленсе çитес тесе куллен пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, район вăрлăх фончĕсем хывса тата вăрлăха пĕтĕмпех сортласа çитерне. Вăрлăхсен пахалăхĕ лайăх. Ялхуçалăх инвентарĕсене çитес 2—3 кун хушшинче пур çĕрте те юсаса пĕтереççĕ. Район вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе çине тăрсах туса пырать. Кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли плана вăл 101 процент, тислĕк турттармалли плана 87 процент тултарнă. Колхозсенче агрокружоксем ĕçлеççĕ.

ĔÇЕ ТУРТĂМ ВĂЙĔ ТАТСА ПАРАТЬ

Вăйлă тырпул туса илес ĕçре туртăм вăйĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку çинчен канашлура докладчик та, прение тухса каланă юлташсем те ытларах чарăнса тăчĕç.

Чылай колхозсенче («Волонтер», Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан, Вăрмаркасри «Самолет», Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан, «Авруй» колхозсем) лашасене аван пăхаççĕ, вĕсем мăнтăр, унта начар лашасем тата чирленнисем çук. Анчах хăшпĕр колхозсенче туртăм вăйĕ çине пачах урăхла пăхаççĕ. Ку вăл пĕтĕмпех колхоз руководителĕсенчен килет. Вĕсем лашасене епле пăхнине, вĕсемпе мĕнле усă курнине тишкермеççĕ, айăплисене ответ тыттармаççĕ. Çапла, сăмахран, Пăваялĕнчи «Большевик» колхозра, начар пăхнă пирки, кăçал темиçе лаша вилнĕ. Çапах колхоз председателĕ Иванов тата ветфельдшер Казанков çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Пачах урăхла, Казанков хăй час-часах конюхсенчен ыйтмасăрах, вăрçса, лашасем илсе кайса, вĕсен çурăмĕсене пăснă.

Хураçырма, Ершипуç, Кĕçĕн Кибек, Мамалай, Зеленовка колхозĕсенче те лашасене кирлĕ пек пăхмаççĕ, вăйран кайнă лашасене ĕçрен хăтарман тата ытти те. Районĕпе илсен вара ырхан лашасен хисепĕ 16 процента çитет.

ÇĔНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ

Канашлу участникĕсем, иртнĕ çулхи итогсене пăхса тухнă хыççăн, кăçалхи çул валли татăклă ĕçсем палăртрĕç. Вĕсем хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

гектартан 17 центнертан кая мар тĕштырă, 3 центнер кантăр сÿсĕ, 4 центнер кантăр вăрри, 110 центнертан кая мар çĕрулми илмелле;

районри колхозсен уйхирне 200.000 тонна тислĕк, 30 пин тонна торф, 3200 центнер кĕл, 2.300 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăлармалла;

кашни колхозрах клевер тата нумай çул хушши ÿсекен курăксене планпа палăртнă хисепрен кая мар акмалла;

çулталăк хушшинче кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 3220 гектар сухаламалла, кашни комбайнпа 120 гектартан кая мар тырă вырса пуçтармалла тата тракторнăй молотилкăпа 450 тонна тырă çапмалла.

Çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерес, хурт-хăмăр ĕрчетес, садсемпе пахчасене çĕнетес тĕлĕшпе те вăрнарсем татăклă обязательствăсем илчĕç.

Юлашкинчен канашлу участникĕсем çак обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртессишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеме районри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсемпе МТС работникĕсене чĕнсе çыру çырчĕç.

Вăрнарсем кăçал та Йĕпреç районне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

Х. ЛИСИН,
Е. ВОЛКОВ.

Кашни колхозник хĕрÿ ĕçре

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Хамăр корр.). «Красин» ячĕпе тăракан колхоз председателĕ коммунистка Школьникова юлташ—пултаруллă организатор. Вăл колхоз ĕçĕнче хăй куллен хавхаланса ĕçлет, колхозниксемпе колхозницăсене те колхоз производствинче куллен тăрăшса ĕçлеттерет, ĕçе мĕнле тумаллине кăтартса парать, вăхăтра тунине тĕрĕслет. Школьникова юлташ çак организациллĕ ĕçе хăй пĕччен мар, ăна вăл пăлтах колхоз активĕпе тачăн çыхăнса, кашни ĕçе колхозри ватă çынсемпе килĕштерсе, коммунистсемпе комсомолецсен сĕнĕвĕсене шута илсе туса пырать.

Çавăнпа «Красин» колхозра председатель пысăк чысра, вăл хăйне ĕçре пиçĕхсе туннă пысăк авторитетпа тивĕçлипе усă курать. Председатель пуçарнă кашни ĕçе актив хăвăрт йышăнса илет, колхозниксем ăна пурнăçлаççĕ.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх ирттересси çинчен постановлени тухсанах, Школьникова юлташ хăй ертсе пыракан колхозра мĕнле ĕçсем туса ирттермеллине палăртса активпа калаçрĕ, кашни колхозника ĕçе уйăрса тăратрĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем кашни ĕçшĕн ответлă пулса тăчĕç. Çавăнпа вара çуракине хатĕрленес ĕç колхозра хăвăртланчĕ. Иртнĕ икĕ эрне хушшинче колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ.

Ватă колхозниксем Лукиянов, Автономов старикĕсем куп-касах тапă сĕрлĕ те ака пăявĕсем, тилхепесемпе урхалăхсем яврĕç. Вĕсем çак хушăра 18 тилхепе, 18 хăмăт пăявĕ, 20 урхалăх тата лаша тавраши кирлĕ ытти пăявсем нумай явса хатĕрлерĕç, çĕнĕрен 25 постромка тунă. Халĕ ĕнтĕ çураки ирттерме çеç мар, çулталăкĕпе ĕçлемех колхозăн хăмăт-пăявсем, вĕрен-тазрашĕсем çителĕклĕ.

«Красин» ячĕпе тăракан колхоз уйхире нумайрах тислĕк пухса кăларас ĕçе аван организациленĕ. Актив пуçарса янипе, кунти кашни колхозник хăйĕн килĕнчи тислĕкне йăлтах колхоза парать. Колхозри 95 хуçалăхран 70 хуçалăхĕ халĕ колхоза пин лав ытла тислĕк кăларса пачĕ. Çакăнпа пĕрлех фермăсенчи тислĕке тирпейлĕн пуçтарса тăтăшах кăларса тăраççĕ. Тислĕк кăлармалли плана колхоз ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Кунти колхозниксем — тĕплĕ хуçасем. Вăрлăх хатĕрлес ĕçе вĕсем чи кирли текех шутлаççĕ. Колхоз кăçал çурхи тырăсене планпа пăхнинчен 50 гектар ытларах акма ĕмĕтленет, лоналарти «Янга Турмыш» колхозăн усăсăр выртакан çĕрне акса хăварма шутлать.

Çакна шута илсен те, колхозăн вăрлăх çураки туса ирттерме хатĕр ĕнтĕ. Пĕтĕм çĕр лаптăкне акса хăварма вĕсене 358 центнер вăрлăх кирлĕ, вĕсем 361 центнер хатĕрленĕ. Вăрлăха тасатнă, кондицие лартнă. Тулă, пăри, урпа вăрлăхĕсене «АБ» текен препаратпа суса акаççĕ. Препарата 8 килограмм илсе хунă.

Лашасене те кунта тирпейлĕн тыткалаççĕ, вĕсене ака ĕçне кăларма тимлĕн упраççĕ.

Лашасене халĕ куллен 4-шар килограмм посыпка, пĕрер килограмм сĕлĕ çитереççĕ. Çуракинче çитерме 138 центнер сĕлĕ уйăрса хунă.

С. ШАДИН.

Аш-какай парса татрĕç

Канаш районĕнчи колхозсем 1944 çулшăн аш-какай памалли плана 87 процент тултарчĕç. Вĕсенчен районти 22 колхоз январĕн 25-мĕшĕ тĕлнех çулталăкри плана 100 процентпех тултарнă. Çулталăк планне Иртемен Кушкинчи «Чуваш ЦИК» колхоз 360 процент, Катекри Киров ячĕпе тăракан колхоз 199 процент, Çĕнĕ Шелттемри «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхоз 120 процент тултарнă. Ку енĕпе кайра пыракан колхозсен малта пыракан колхозсенчен пример илмелле, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татассишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

ТАСС опроверженийĕ

Çак кунсенче Англири «Санди экспресс» хаçатра пĕр Джордж Слокомб ятлă господин статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра вăл Германипе мир тăвас тĕлĕшпе Совет Союзĕ лартакан условисем çинчен Сталин мĕнле шухăшланине каласа парать, çакна вăл «нумаях пулмасть Сталинпа калаçнă» çынсен сăмахĕсем тăрăх çыратăп, тет.

Питĕ шанчăклă даннăйсем тăрăх, ТАСС çапла калама пултарать: Слокомб статьинче илнĕ мар çынсемпе Сталин «калаçни» çинчен çырнă пайĕ те, çапла вара Германипе мир тăвас тĕлĕшпе Совет Союзĕ лартакан условисем çинчен çырнă пайĕ те пĕтĕмпех пуçран шухăшласа кăларнă суя япала пулса тăраççĕ.

Ют çĕршывсенче

ССР Союзĕпе Итали пĕр-пĕрин патĕнче хăйсен представителĕсене тытасси çинчен

АЛЖИР, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Кăçалхи мартăн 7-мĕшĕнче Итали правительстви министрсен совечĕн председателĕ пулса ĕçлекен Бадольо маршал урлă Совет правительствинчен ССР Союзĕпе Итали пĕр-пĕрин хушшинче тÿрремĕнех çыхăну тытма пуçласа яма тата пĕр-пĕрин патне хăйсен представителĕсене ямалла тăвас тесе ыйтнă. Мартăн 11-мĕшĕнче Совет правительстви Бадольо маршала ССР Союзĕпе Итали хушшинче тÿрремĕнех çыхăну тытассине пуçласа яма тата пĕр-пĕрин патне хăйсен представителĕсене яма килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

Чехословаки правительстви Чехословаки халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 12-мĕшĕнче, Германи Прага хулине оккупацилени 6 çул тултарас умĕн (Прага хулине ăна 1939 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче оккупациленĕ), Чехословаки правительстви Чехословаки халăхне чĕнсе каланă, вăл ăна нимĕçсене активлăн хирĕç тăма пуçлама чĕннĕ.

Хĕрлĕ Çар Чехословакин кĕвелтухăç енчи чиккинчен 120 мильăра кăна тăрать, тенĕ чĕнсе каланинче. «Хĕçпăшаллă ушкăнсем тата партизан отрячĕсем тăвăр. Тăшман пирĕн çĕршывран чакма пуçласан, пĕр çын та хĕçпăшалсăр тăрса юлмалла пулмасть ... Ирĕке кăларакан çар çывхарса килет. Патриотсем! Ирĕклĕ те демократиллĕ Европăри телейлĕ, ирĕклĕ, никама пăхăнман тата демократиллĕ Чехословакишĕн çапăçăр».

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсем Гамбург хулине, çавăн пекех тата Хĕвеланăç Германири ытти объектсене те тапăннă. Мартăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Хĕвеланăç Германие татах тапăннă.

Мартăн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин йывăр бомбардировщикĕсем Клермон-Ферранри, Оссумри тата Шаторури авиаци заводĕсене, çавăн пекех тата Рикамарири (Франция) подшипниксем тăвакан завода тапăннă.

Америка бомбардировщикĕсем Флоренцири сортировка станцине тапăннă. Ку станци вăл — нимĕç çарĕсем усă куракан чугун çулсен центрĕ пулса тăрать.

Иртнĕ эрнере Берлина тата Германири ытти объектсене йышлăн вĕçсе кайса тапăннă чухне союзниксен авиацийĕ нимĕçсен 321 самолетне персе ÿкернĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен çырана хÿтĕлекен çăмăл карапĕсем Югослави çыранĕсем патĕнче тăшман суднине путарнă. Тыткăна илнисем пур.

Пур фронтсенче те патрульсем кĕрешнĕ. Анцио патĕнчи кĕпер умĕнчи укрепленисенче союзниксен артиллерийĕ тăшман позицийĕсене хытă пенĕ.

Мартăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен самолечĕсем Генуя хулине тата тăшманăн Италин хĕвеланăç çыранĕнчи чугун çул объекчĕсене тапăннă. Кун каçа тăшманăн 36 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 14 самолет пĕтнĕ.

КĔСКЕН

● Римра апат-çимĕç запасĕсем пĕтсе çитнĕпе пĕрех. Халăх выçлăх умĕнче тăрать. Шыв çитменни те питĕ палăрать.

Редакцине килнĕ çыру

Конвейер çинче вунпĕрмĕш председатель...

КАЛИНИНО. Райкомол çуртне кĕретĕн те пĕр пĕттĕмрех кĕтесре ларакан сĕтел хушшинче типшĕмрех сăнлă çамрăк ача ик-виç çул каялла çĕлесе хунă ĕç хучĕсене уçа-уça хуппине асăрхаса илетĕн. «Темĕн тумалла, хам та пĕлместĕп»,— вăрçать вăл хăйне-хăй. Татах çĕтĕлсе пĕтнĕ хутсене пăтратма тытăнать

— Гаврилов юлташ, эсир райкомăн çарĕç пайне кайса ыйтăр-ха, мĕнле ĕçлемеллине каласа парĕç унта, — хушса хурать райкомол секретарĕ.

— Кайса пăхнă, военкоматăн инструкторĕсемпе те калаçнă, нимĕнех те каламаççĕ, — тет ăна хирĕç Осоавиахимăн районри совечĕн председателĕ П. Гаврилов.

Отечественнăй вăрçă тылри ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентесси çине пиxăçанхинчен те ытларах çавăрăнса пăхма хушать. Çак ĕçре Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсен хăйсене тивĕçлĕ вырăна йышăнмалла. Анчах та Калинино районĕнче Осоавиахим организацийĕсен ĕçĕ пĕтсе ларнă тесен те йăнăшах пулмасть.

Вăрçă пуçланнăранпа Осоавиахим райсовечĕн председателĕн конвейерĕ çине вунпĕрмĕш çын тăма ĕлкĕрчĕ. Председательсем çакнашкал хăвăрттăн улшăнса пынине шута илсен, Осоавиахимăн хуçалăхĕ япăхса кайни каламасăрах паллă.

Осоавиахим райсоветĕнче вĕренмелли винтовкăсемпе противогазсем кирлĕ таранах пулнă. Халĕ çав пурлăх ăста саланса пĕтнине никам та пĕлмест. Документсем тăрăх та тупса çитерме хĕн. Унтан та ытларах, сĕтел-шкапсемпе шкапа кам илсе тухса кайни те паллă мар.

Член билечĕсен бланкисемпе маркисене те кама килчĕ—ăна салатса пĕтернĕ. Акă, педучилищĕре вĕренекен В. Ландышев аллинче Осоавиахим членĕн билечĕсем 50 тата 200 тенкĕлĕх марка пур. Вăл Осоавиахим организацийĕн председателĕ мар, пулман та.

Райсоветра колхозсенчи пуçламĕш организацисенче тăракан членсен шучĕ кăна мар, районра миçе пуçламĕш организаци пурри те паллă мар. Член укçисене пуçтарас, çĕнĕрен членсем хутшăнтарас ĕç манăçа тăрса юлнă. Çавнашкалах, укçа-тенкĕ учетне те пăтраштарса пĕтернĕ. 1943 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнчен вара касса кĕнекине çырса пыман. Çавна пула, Осоавиахимăн район советĕнче ĕçленĕ хăшпĕр çынсемшĕн укçа-тенкĕ шыв вырăнне кăна шутланнă. Акă; райсовет председателĕ пулнă Н. Зайцев хăйĕн шăллĕне С. Зайцева, инструкторта ĕçленĕ пек туса, 1017 тенкĕ тÿленĕ. С. Зайцев инструктор пулса ĕçленине никам та пĕлмест. Халĕ кунта ... ĕç хучĕсем те кăтартса памаççĕ.

Калинино районĕнче Осоавиахим организацийĕсен ĕçĕсем çакнашкал япăхса кайни Осоавиахимăн Центральнăй Совечĕшĕн паллă пулмасăр юлма пултарайман. Анчах вăл Осоавиахим ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе мĕншĕн нимĕнле мера та йышăнмасть-ха?

Е. ВОРОБЬЕВ.

Юнкă шкулĕн çитĕнĕвĕ

1943—1944-мĕш вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче Юнкăри тулли мар вăтам шкул мала тухни чылайĕшне тĕлĕнтерет.

Мĕнле-ха вăл, иртнĕ вĕренÿ çулĕнче чи кая юлса пынăскер, кăçал мала тухнă?

Николай Иванович Суворов иртнĕ çулти август уйăхĕнче Юнкă шкулĕн директорĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Вĕренÿ çулĕ пуçланиччен çур уйăх кăна юлнă. Çак кĕске вăхăтра шкулăн çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитмелле пулнă.

Суворов юлташшăн ку питех те пысăк ĕç. Вăл, Отечественнăй вăрçăран йывăр аманса таврăннăскер, утма та пултарайман. Анчах Суворов юлташ йывăрлăхсенчен хăраса тăман, ĕçе хастарлăн тытăннă.

Хваттертен шкула, шкултан колхозсене лавпа çÿресе, çĕнĕ директор вĕренÿ çулне пуçăнма мĕн кирлине пурне те хатĕрлесе çитерчĕ. Вырăнти парторганизаципе колхоз активĕ пулăшнипе çурт-йĕрсене юсас ĕçе организациленĕ, вутă турттарнă. Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарнă. Хăшпĕр ачасем тумтир çук пирки занятисене сиктерсе çÿренĕ. Çак ыйтăва колхоз правленийĕн ларăвĕнче сÿтсе явса, 22 ачана ăшă тумтир панă. Çакăн хыççăн ачасем пурте шкула пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче учительсен коллективĕ туслă пурăнман, пĕр-пĕринпе час-часах хирĕçнĕ. Суворов юлташ çак çитменлĕхе пĕтернĕ: учительсен коллективне таччăн пĕтĕçтернĕ, шкул ĕçне пур енĕпе те лайăхлатассишĕн кĕрешнĕ, пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăрту сарса янă. Ăмăрту результачĕсене çырса пыма кăтарту хăми, малта пыракан классене пама куçса çÿрекен икĕ Хĕрлĕ ялав тунă.

Виççĕмĕш класра шкула кун сиктерсе çÿрекен ачасем çук, пĕрех, вĕренÿре пурте ĕлкĕрсе пыраççĕ. Класра—отличниксем чылай. Çакă вăл учительница Е. Еремеева юлташ тăрăшса ĕçленин паха результачĕ. Еремеева юлташ хăйĕн класне пĕтĕмпех отличниксен класĕ тăвассишĕн кĕрешет.

V-мĕш «б» класс вĕренÿ пахалăхĕ тата дисциплина енĕпе малта пырать. Çавăн пекех I-мĕш, II-мĕш тата IV-мĕш классем те иртнĕ чĕрĕке пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç. V-мĕш «А», V-мĕш «Б», VI-мĕш «А» тата VII-мĕш «А» классенче те вĕренÿре ĕлкĕрсе пыман ачасем çук. VII-мĕш «Б» класра çеç пĕр ача алгебрăпа ĕлкĕрсе пыраймасть.

Çапла вара, иккĕмĕш чĕрĕкре шкулти 257 ачаран 53-шĕ отличниксен ретне тăнă, вĕренÿре ĕлкĕрсе пырасси 99,5 процента çити ÿснĕ.

Вĕренекенсем хушшинче çирĕп дисциплина пулни вĕренÿ пахалăхне ÿстерет. Кунта «Вĕренекенсен хăйсене тыткаламалли правилисене» учительсемпе вĕренекенсем те тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çак правилăна пăхăнман ачасем çинчен çийĕнчех сÿтсе-яваççĕ. Кунта кĕçĕнни сем аслисене хисеплесси кулленхи йăлана кĕнĕ.

Николай Иванович, малтан ВЛКСМ райкомĕнче ĕçленĕскер, шкулти комсомолпа пионер организацийĕсен ĕçне мĕнле йĕркелесе ерисе пымаллине лайăх пĕлет. Иртнĕ çулта чылай комсомолецсем шкултан вĕренсе тухнă, çавăн пирки кăçалхи вĕренÿ çулĕн пуçламĕшĕнче шкулта комсомолецсен йышĕ пĕчĕк пулнă. Суворов юлташ вĕренÿре малта пыракан ачасене ВЛКСМ ретне илес ĕçе йĕркеленĕ. Комсомолец-учительсем аслă класра вĕренекенсене ВЛКСМ уставĕпе программи çинчен ăнлантарса панă, Ленинла-Сталинла комсомолăн историйĕпе паллаштарнă. Çавăн хыççăн чылай вĕренекенсем комсомол ретне кĕнĕ. Хальхи вăхăтра организацире 13 комсомолец шутланать. Вĕсене В. Новикова юлташ ертсе пырать. Вăл комсомолецсене пур предметсемпе те отлично вĕренекен тăвас задача лартнă. Комсомолецсенчен чылайĕшĕ—отличниксем. VII-мĕш «В» класра вĕренекен комсомолец Нестер Атласкин вĕренÿ çулĕн пуçламĕшĕнче «посредственно» паллăсемпе вĕреннĕ. Халĕ вăл «посредственно» паллăсем илмест, çитес вăхăтрах отличниксен ретне тăма шанчăк парать.

Шкулта пионерсен 7 отрячĕ пур. Вожатăйсем пулса комсомолецсем ĕçлеççĕ. Кашни вожатăй хăйĕн отрядне вĕренÿре мала кăларассишĕн кĕрешет.

Шкулта пионерсем валли уйрăм пÿлĕм пур. Унта—пионерсен атрибучĕсем, партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, лозунгсемпе плакатсем. Отрядсемпе звеносен сборĕсене, çирĕп расписани тăрăх, çак пÿлĕмре ирттереççĕ. Сборсенче пионерсем Отечественнăй вăрçăн паллă участникĕсемпе тĕл пулаççĕ, фронтовиксем пионерсене Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерÿĕсем çинчен, нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсен тискер ĕçĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Кунсăр пуçне сборсенче Совет Союзĕн мухтавлă геройĕсем çинчен каласусем ирттереççĕ. Ку таранччен вилĕмсĕр геройсем — Зоя Космодемьянскаяпа Шура Чекалина çинчен тата Краснодон хулинчи комсомолецсен шиксĕр ĕççĕсем çинчен каласусем ирттернĕ.

Шкулта уйăхра пĕр номер «Отличник» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Унăн редакторĕ учительница-комсомолка А. Кузьмина юлташ шкулти пичет ĕçне учительсемпе вĕренекенсене явăçтарнă. Хаçат вĕренÿ, социализмлă ăмăрту, комсомолпа пионер ĕçĕсене лайăх çутатса тăрать.

Кунта ачасен художествăллă пултарулăхне аталантарса пыраççĕ. Пурĕ 5 кружок ĕçлет.

Шкул коллективĕ фронта пулăшас тĕлĕшпе те лайăх ĕçленĕ. Кăçал 442 килограмм тимĕр-тăмăр пухса панă, шăлан çырлипе эмель курăкĕсене те сахал мар пухнă. Хĕрлĕ Çар воинĕсем патне икĕ посылка янă. Укçа-тенкĕпе япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене 4680 тенкĕлĕх туяннă.

Юнкă шкулĕнчи учительсем хăйсен пĕлĕвне ÿстерсе пыраççĕ. Кунта кашни çамрăк учитель заочнăй йĕркепе вĕренет. Ачасен хĕллехи каникулĕ вăхăтĕнче заочниксем пурте сессине кайса килчĕç.

Т. ИВАНОВ,
(Хамăр корр.).

Сĕнтĕр районĕ.

Пĕлтерÿ

Мартăн 16-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн парткабинечĕнче пропагандистсемпе кружоксен руководителĕсем тата юлташла каласусем ирттерекенсем валли çакăн пек темăпа инструкциллĕ доклад пулса иртет: «Верховный Главнокомандующий Сталин юлташăн 1944 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнчи 16-мĕш номер приказĕ».

Докладчикĕ 3. А. Купер юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔН ПАРТКАБИНЕЧĔ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн —4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00592 Типография №1 Управлени полиграфпромышленноçĕсен пая СНК ЧАССР Заказ №2 ф. 6 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз